**Чĕппĕм теттĕн…**

«Чĕппĕм, — теттĕн эс, анне, мана, —
Пӳ те кирлĕ çын çине тухма.
Хывнă пулинех эс куккуна,
Сан кукку хевтесĕр çын пулман».

«Чунăм, — теттĕн эс мана, анне, —
Сăн та кирлĕ хĕрсене савма.
Хывнă пулинех эс пиччӳне,
Вăл сăпатсăр, нĕрсĕр этем мар».

«Ывлăм, — тетĕн эс, анне, мана, —
Сывлăх кирлĕ чăн салтак пулма.
Хывнă пулинех эс аçуна,
Вăл нихçан та мăшкăлра юлман.

Эп туяттăм санăн чĕрӳне...
Çулăм кирлĕ халăхшăн çунма.
Хывнă пулинех эс аннӳне,
Вăл суеçĕ туйăмлă пулман».

Пӳллĕ пултăм. Саврăм савнине.
Шинеле хакларăм чыс пекех.
Халăхшăн хĕртетĕп чĕрене...
Урăх чăнлăх шырас çук текех.

Миçе çын паян манра пурнать!
Эп тытап кашниншĕнех явап...
Хамăн та ача ураланать,
Эп ăна анне пекех калап.

*Гордеев, Д. Чĕппĕм теттĕн : [сăвă] / Д. Гордеев // Тăван Атăл.* - 2010. *– № 2. – С. 85.*